Чăваш Республикин культура, национальноçсен ĕçĕсен
тата архив ĕçĕн министерстви
Чăваш Республикин Наци библиотеки
«Чăваш кĕнеки» центр

***Чăваш енĕн чаплă çыннисем, паллă кунĕсем
12 кăларăм***

# *«ÇĔРĔМ-ШЫВĂМ ИКСĔЛМИ ÇĂЛКУÇ…»*

*Г.А. Ефимов çуралнăранпа 85 çул çитнĕ тĕле.
Поэзи каçĕн сценарийĕ*

Шупашкар
2013

ББК 78.381.9:83-52<Ефимов Г.А.>
Ç

Редакци совечĕ: М. В. Андрюшкина
А. В. Аверкиева
Т. М. Баймушкина
Н. Т. Егорова
Т. А. Николаева
Г. П. Соловьева
Е. Н. Федотова

Кăларăмшăн яваплă: Г. П. Соловьева
Хатĕрлекенĕ: Л. Г. Тестова

«Çĕрĕм-шывăм иксĕлми çăлкуç…» : Г. А. Ефимов çуралнăранпа 85 çул çитнĕ тĕле. Поэзи каçĕн сценарийĕ / Чăваш Республикин Наци библиотеки ; хатĕрлекенĕ Л. Г. Тестова. – Шупашкар, 2012. – 18 с. – (Чăваш енĕн чаплă çыннисем, паллă кунĕсем ; 12 кăларăм).

Компьютерпа пичетлекенĕ: Л. Г. Тестова
Версткӑлаканĕ: Е. Н. Федотова

Оригинал-макет изготовлен и отпечатан в отделе «Сервис-центр»
Национальной библиотеки Чувашской Республики
428000, г. Чебоксары, пр. Ленина, 15
E-mail: naclibrary@cap.ru, publib@cbx.ru
www.nbchr.ru
Тираж 30 экз.

© Чăваш Республикин Наци библиотеки, 2013

*Зала илемлетмелли хатĕрсем: сывлăш шарĕсем, пучахсем, ачасем хатĕрленĕ стена хаçачĕ, кĕнекесен выставки, слайд-шоу.*

*Залра Г. Ефимовăн пурнăçĕпе пултарулăхĕ çинчен каласа паракан кĕнекесен выставкине йĕркеленĕ, поэзи каçĕ вĕренӳ заведенийĕнче иртет пулсан, вĕренекенсем поэта халаллана стена хаçачĕ хатĕрлеме пултараççĕ. Сценăна тырă пучахĕсемпе илемлетсен аван.*

*Мероприяти Г. Ефимовăн «Çăкăр» сăвă сыпăкĕнчен пуçланать. Сăвва вуланă чух экран çинче уй-хир, çăкăр ӳкерчĕкĕсене, ыраш пучахĕсем çил çинче вылянине кăтартма пулать. Г. Ефимов сăмахĕсем çине çырнă кĕвве хуллен ярсан аван е урăх илемлĕ кĕвĕ.*

**Çăкăр татăкĕ çинчен**

Ун чух эпир кил-йышĕпех хиртеччĕ,
Хĕрсех ыраш выраттăмăр кашни.
Кунĕ шăратнă евĕрех хитреччĕ,
Хĕвелĕ çурăма хыт пĕçертетчĕ,
Тарăхтаратчĕ çурăм ыратни.
…
Хĕвел, чăнах та, шелсĕр ăшалать.
Атте ак тăчĕ.
Икĕ аллине
Вăл хучĕ те вара пилĕк çине:
«Пилĕк тӳрлентĕр-ха…», – хыçалалла
Пĕр ик-виç хут авăнкалать.

Эпир, шăпăрлансем, кăна курсассăн,
Çурласене кĕлте çине лартса,
Сиккелесе илетпĕр те хавассăн,

Сулхӑналла чӑматпӑр ӑмӑртса.
Пилӗк сурни те халӗ ним те мар,
Сивӗ уйран, чуна йӑлт уҫса яр.
…
Никам та калаҫмасть. Пурте ҫиеҫҫӗ…
Ҫак самантра
Темскершӗн юнтарса
(Ҫулсем ытла та хӑвӑрттӑн иртеҫҫӗ,
Мӗскершӗн-ши, параймӑп каласа)
Яратӑп ҫӑкӑр татӑкне вӑрса.

Ҫакна вара пит лайӑх астӑватӑп,
Сире йӑлтах тӳррипеле калатӑп:
Атте ҫат! Ҫатлаттарчӗ те питрен,
Хулран мана тӑратрӗ ҫӗклесе:
– Ҫӑкӑрпала ан иртӗх ӳлӗмрен…
Халех кунта эс килнӗ пул илсе!
Ӑна вӗрсе тасат та тусанран,
Вара пирӗн умра ҫисе яран.
Унтан эс каҫару ыйт аннӳнтен…
Хӗвел анса ларсан,
Хиртен килсен,
Вӑл чуста хунӑ ыйхине татса.
Кайран каллех,
Кӑвак ҫутпа тӑрса,
Вут хутса янӑ хӗвелпе пӗрле.

Ӑна, ачам, кашнийӗн пӗлмелле,
Кӑмакаран ӑш ҫӑкӑр вӑл кӑларнӑ,
Сӗтел ҫине вӗри яшка антарнӑ.
Эс, ывӑлӑм, ҫав ҫӑкӑра перетӗн,
Капла ху аннӳне кӳрентеретӗн…
Эп пенӗ татӑка кайса илетӗп,
Темиҫе хут вӗретӗп те ҫиетӗп.
…
Кайран атте манпа юнашар ларчӗ,
Мана ыраш пучаххине тыттарчӗ:

– Пĕлетни эсĕ,
Çакă пучахра
Пĕр çитмĕл пĕрчĕ пулĕ.
Вĕсене
Акса хăварнă иртнĕ кĕркунне.
Анчах та сивĕре, шартламара,
Вăл пуçĕпех пĕтме те пултарать.
Çулла эс ăшă тивесрен хăран,
Тата чуну юлмасть пăр çапасран.
Пулса çитсессĕн,
Выр эс вăхăтра,
Ахаль пĕр пĕрчĕ юлмĕ пучахра…
Пĕр татăк çăкăр пит хакла ларать,
Ăна, ачамçăм, ăнланас пулать.
…
Тырă тени вăл савăнăç, вăл хурлăх,
Вăл ылтăнран та питĕ хаклă пурлăх.
Çампа каланă пулĕ: «Çăкăртан
Хуна асла ан хур эс нихăçан».
…

*Ертсе пыракансем хăйсен сăмахĕсене каланă чух слайдсем улшăнса пымалла.*

**1-мĕш ертсе пыракан**: Ырă кун пултăр, хисеплĕ хăнасем.

**2-мĕш ертсе пыракан**: Çак залра тин çеç янранă сăвă иртнĕ ĕмĕрти 70-мĕш çулсенче пĕтĕм Совет Союзĕпе паллă пулнă. Унăн авторĕ – сăвăçă, поэт Георгий Андреевич Ефимов. Кăçал (2013 ç.) вăл çуралнăранпа (июлĕн 9-мĕшĕнче) 85 çул çитрĕ.

**1 е. п.:** Вуласа панă сăвă çинче кăшт чарăнса тăрар. Пĕр-ремĕш хут ăна мартăн пуçламăшĕнче, 1970-мĕш çулта пĕтĕм Союз çĕршывĕн радиовĕпе вуланă. Сăвва чăвашран вырăсла Георгий Андреевич юлташĕ, Максим Горький ячĕллĕ литература институтĕнче пĕрле вĕреннĕ Владимир Фирсов куçарнă.

**2 е. п.:** «Поэтическая тетрадь» передачăра янранăскер, çак сăвă нумай-нумай çын чĕри патне çитнĕ. Редакцие сăвăн текстне ярса пама, ăна тепĕр хут трансляцилеме ыйтакан çырусем килсех

тăнă. 1973-1974-мĕш çулсенче сăвва тата 10 хута яхăн янраттарнă.

**1 е. п.:** Георгий Ефимовшăн «çăкăр» тени ахаль сăмах пулман. Ăна халалласа вăл темиçе сăвă та çырнă. «Çăкăр» сăвă. Итлетпĕр. (*произведенин пĕр пайне çеç вуласан та юрать*):

**Çăкăр**

Кăмакаран кăларнăран,
Çап-çаврака та сарăскер,
Сĕтел çинче выртать вăл, курăр, –
Çĕн тырă çăкăрĕ. Çĕнни!
Унăн ятне халь юрă хурăр,
Ăна мухтатăр-и кашни.

Çĕн çивитти-çке уншăн сарнă
Паян çавра сĕтел çине.
Шăрши пĕтĕм пӳрте ав сарăлнă,
Вăл тухнă-мĕн урамсене.

Çынсем иртнĕ чухне пăхаççĕ
Ăшă куçпа çурт еннелле,
Вара çĕкленчĕклĕн утаççĕ
Вĕсем те савнă килнелле.

Выртать çĕн çăкăр хĕвел евĕр,
Уй-хир шăрши кĕрет унран.
Аслатисен кĕр-кĕр кĕрлевĕ
Янрать халь ыррăн хăлхара.

Чашлаттарать сипетлĕ çумăр,
Тымарсене сĕткен парать.
Ĕçчен çынсен йĕпеннĕ тумĕ,
Йĕпентĕр-и, мĕнех вара!

Ак пĕлĕтсем иртсе каяççĕ,
Тӳпе те тасалсах пырать.
Кӳлленчĕксем кулма пуçлаççĕ,
Озонпала тавра тулать.

Çумăрпала пит çунă тырă
Çилпе типтерлĕн шăлăнать.
Нӳр илнĕ çĕр сывлать те ыррăн,
Пĕчĕк ача пек карăнать.

Çĕн тырă çăкăрĕ!
Çĕршыв
Касса хурать-çке чĕллĕн-чĕллĕн.
Хĕвел, уй-хир, вăрман шăрши
Унран кĕнишĕн эс ан тĕлĕн!

Кăшт куштăркană алсемпе
Чĕлле эп кăмăллăн тытатăп.
Ĕçе вĕреннĕ çемьепе
Çавра сĕтел умне ларатăп.

Ĕçленĕ чух тар юхнă пулĕ,
Тен, мăкăртатнă хăш-пĕр чух?..
Халь, тусăм, кăмăл çĕкленӳллĕ,
Ман пек телейлĕ çын та çук!

Кăмакаран кăларнăскер,
Çап-çавракаска та сарăскер,
Сĕтел çинче выртать вăл, пăхăр:
Хамăр алпа пĕçернĕ çăкăр!

**2 е. п.:** Пулас поэт 1928 çулхи утă уйăхĕн 23-мĕшĕнче Чăваш АССРĕнче, Канаш районĕнчи Малти Ăнтавăш ялĕнче çуралнă. Ӳснĕ кĕтес сăввисенче тĕрлĕрен сăнланса юлнă. Пĕр «ӳкерчĕкĕ» сире валли:

Шур хурӑнсем, шур хурӑнсем,
Ҫӗрле те шуррӑн курӑнатӑр.
Ҫулҫӳрене, телей сӗнсе,
Ун сукмакне шав ҫутататӑр.

Ҫав ҫутӑ ҫӗр нӳрӗпеле
Тымарсем тӑрӑх хӑпатать-мӗн.
Нихҫан та хурӑн ҫӗрпеле
Сӑватлӑ туслӑхне ҫухатмӗ.

Вулли ҫинче – пӑчӑр хура, –
Кӗпи тӗлӗнмелле илемлӗ.
Хӗрсем, тен, хурӑна кура
Симӗс сапунлӑ, шур кӗпеллӗ.

Тӑван ялтан инҫе ҫӗрте
Ҫӳренӗ чух та йӑрӑс хурӑн
Ҫутипеле тек илӗртет –
Асамлӑ вӑй-хӑвачӗ пур ун.

Шур хурӑнсем, шур хурӑнсем, –
Ҫуралнӑ ҫӗрӗмӗр илемӗ!
Сире курсассӑн, ӗҫченсен
Епле-ха чун-чӗри ҫӗкленмӗ?!

Тӗл пулсанах хурӑнсене
Эп киле ҫитнӗ пек туятӑп.
Сӗтел ҫине тӑван анне
Сӑйне майланине куратӑп.

**1 е. п.:** Поэтӑн пӗрремӗш сӑввисем *«Кӗркунне» тата «Ҫуркунне ем-ешӗл курӑк...»* ятсемпе «Ялав» журналта, 1946 ҫулта, 10-мӗш номерте пичетленсе тухнӑ.

Ҫуркунне ем-ешӗл курӑк
Сӑрт-тусем ҫине витсен,
Вӑйӑра сана эп курӑп
Каҫсерен.

Çитĕнĕ сип-симĕс утă,
Савăнтарĕ халăха;
Санпала пĕрле эп утăп
Улаха.

Кăкăр çӳллĕш ӳсĕ тулă
Пирĕн аслă пусăра.
Санпала пĕрлех эп пулăп
Вырмара.

Кĕркунне сар ылттăн тырă
Пӳлмене кĕрсен кăна,
Сан аçу килне эп килĕп
Хăтана.

**1 е. п.:** Çут çанталăк, тăван кĕтес илемĕ Георгий Ефимовăн поэзийĕнче пысăк вырăн йышăнать. Гражданла лирика и вăл, вăрттăн туйăмсем çинчен çырнă сăвă-и – пур произведенинче тенĕ пекех тавралăха юратни, сăнама пĕлни курăнса тăрать:

Çакна пĕлесчĕ-çке, сисесчĕ:
Мĕнсем, ара, çаплах çиçеççĕ?
Çут çăлтăр-и çӳл тӳпере,
Утмăлтурат-и çеçкере?
Е санăн куçусем пăхаççĕ,
Канăçăма тек çухатаççĕ?

**2 е. п.:** 1944 çулта Чурачăк районĕнчи «Çĕнтерӳшĕн» хаçат редакцийĕнче вăй хунă, çав çултах Чăваш патшалăх академи театрĕ çумĕнчи студийе вĕренме кĕнĕ.

**1 е. п.:** Йĕпреçри колхоз театрĕнче ĕçленĕ тапхăрта Георгий Ефимов çырма пăрахмасть. 1948 çулта, çу тапхăрĕнче, вăл писательсен союзĕн пӳлĕмне сăвăсемпе тултарнă хулăм тетрадьпе пырса кĕрет.

**2 е. п.:** Çав кунах ăна пĕлӳ пухмашкăн Литература институтне яма шутлаççĕ. Литература институтне пĕтернĕ хыççăн Георгий Александрович пуçĕпех поэзи тĕнчине каять.

**1 е. п.:** 1948–1953-мĕш çулсенче Георгий Ефимов А.М. Горький ячĕпе хисепленекен Литература институтĕнче

вĕреннĕ. Вăл çулсенче пĕтĕм çĕршыври паллă писательсемпе, поэтсемпе паллашнă, туслашнă.

**2 е. п.:** Вырăс поэчĕ, прозаикĕ Евгений Долматовский Георгий Ефимовăн диплом ĕçĕн ертӳçи пулнă. Вăл чăваш поэчĕн ĕçне çакăн пек хак парать:

*«Ефимов – лирик, его стихам свойственна непосредственность и та смелая откровенность, без которой лирика становится холодной и просто ненужной. Большинство стихотворений Г. Ефимова написано на тему сегодняшней жизни родной ему колхозной деревни, однако и в других темах молодой поэт умеет найти себя… Стихи Г. Ефимова производят светлое, радостное впечатление. Молодой поэт вернется в родную республику выросший и окрепший. Можно уверенно сказать, что он будет благотворно работать в советской литературе».*

**1 е. п.:** Литература Институтне пĕтернĕ хыççăн нумай çул хушши Чăваш кĕнеке издательствинче, Чăваш писателĕсен союзĕн консультанчĕ пулса ĕçленĕ, темиçе çул «Ялав» журнал редакторĕ пулнă, «Комунизм ялавĕ» (Хыпар) хаçатра литература пайĕн пуçлăхĕнче вăй хунă. Унтан каллех «Ялав», «Тăван Атăл» журналсен редакцийĕнче тăрăшнă.

**2 е. п.:** Георгий Ефимов питĕ нумай произведени çырса хăварнă: сăвăсемпе поэмăсем çеç мар, калавсемпе повеçсем те чылай. Вăл çырнисене вырăсла, украинла, финла, нимĕçле, удмуртла, çармăсла, еврейла,бурятла т.ыт. нумай чĕлхене куçарнă. (*Куçарăвĕсем пур пулсан, выставка валли усă курмалла*). Ачасем валли çырнă япаласем те чылай авторăн.

*(Ачасем валли çырнă сăвă – «Тусăмсем» кĕнеки (1956)-е калав тăрăх сценка лартма пулать – «Ырă кăмăл» (1968), «Акăшпи»(1960) кĕнекесем).*

**1 е. п.:**

### Петĕр

– Петĕр, питне çу, тумлан,
Унсăрăн шкултан юлан,
Вăхăт ĕнтĕ, – тетĕп.

Вăл мана куçран пăхать,
Чăркăшса сăмах хушать:
– Эп хамах пĕлетĕп!..

Кăнтăрла иртсен киле
Хашкаса чупса килет.
Сумкине вăл ывăтать кĕтессе.
Васкаса апат çиет.
Вара ырă кăмăллăн
Урамра çӳрет-çке вĕçтерсе.

Çитет пулĕ выляса,
Кăшт ларасчĕ вуласа, -
Эп ăна чĕнетĕп.
Вăл кӳренчĕклĕн пăхать,
Чăркăшса сăмах хушать:
– Эп хамах пĕлетĕп!

Тепĕр кун вăл урокра
Шиклĕн пытанса ларать:
«Иккĕ» паллă çакланать пурпĕрех.
Переменăна тухсан,
Кăларать кара тусан.
Ашкăнас тесен, кам çитĕ Петĕре?

– Петĕр, тӳрленесчĕ сан,
Класа каялла туртан,
Намăс мар-и? – тетĕп.
Вал мана куçран пăхать,
Хĕрелмест, сăмах хушать:
– Эп хамах пĕлетĕп!

«Эп хамах пĕлетĕпсем»,
Халь куратăр хăвăр,
Юмахри пекех вĕсем
Тӳрленмеççĕ хăвăрт.
Çавăнпа та ушкăнпа
Вĕсене питлер-и?

Ялан «пиллĕк» паллăпа
Пурте вĕренер-и?

Тен, ак Петĕр те кĕçех
Хăнăхĕ ĕçе.
Вара калĕ вăл сăмах:
– «Пиллĕк» илтĕм эп хамах.

*(Ку сăвва суйласан – ăна ачасемпе инсценировка пек хатĕрлеме пулать).*

**2 е. п.:** Поэт çырнă произведенисем лирикăллă туйăмлăх тарăнлăхĕпе, сăнарсен витĕмлĕхĕпе, чĕлхе çепĕçлĕхĕпе уйрăлса тăраççĕ, кулленхи пурнăç чăнлăхĕпе килеççĕ. Тарăн шухăшлă йĕркесем çынсен чунĕсенче юрă-кĕвĕ пулса йĕр хăварчĕç.

**1 е. п.:** Ф. Лукин композитор поэт лирики çинчен çапла каланă: «Георгий Ефимов сăввисенче музыка туйăмĕ вăйлăн палăрса тăрать». Унăн сăввисемпе Ф. Лукин *(«Юратмасăр юрă çуралмасть», «Хăна юрри», «Сарă Шупашкар», «Çамрăксен вальсĕ» т. ыт. те)*, Г. Хирбю *(«Шупашкарăм, савнă Шупашкарăм», «Мĕншĕн куртăм-ши сана», «Ĕмĕтĕм – çунатăм» т. ыт. те*), А. Орлов-Шузьм *(«Ытарайми çĕршыв» т. ыт. те)*, Ан. Асламас *(«Савнă тусăм», «Тăван шкул» т. ыт. те)*, Т. Фандеев *(«Парнеле мана юрă», «Çунатлă ĕмĕр çыннисем», «Юрату юрри» т. ыт. те)*, А. Токарев *(«Улăха тухсан», «Атăл хумĕсем» т. ыт. те)* композиторсем нумай-нумай юрă çырнă. Паянхи кунччен юрлаççĕ вăл юрăсене, хăшне-пĕрне «халăх юрри» текенсем те пур.

*(Г. Ефимăв сăввипе кĕвеленĕ юрă янрасан аван, е пĕр-пĕр юрăпа ташă лартма пулать)*

**2 е. п.:** Георгий Ефимов юрату лирикине аталантаракансенчен пĕри. Ун пултарулăхĕнче туслăхпа юрату, юлташлăх, тăван тавралăх илемĕ, пурнăç хавасĕ тапса тăрать. Пурăнан кунçулри кашни пулăма сăвва хывать ӳнерçĕ, çапла этем шăпин вăрттăнлăхне тупать. Нимпе палăрман пулăмсенчех вăл тарăн шухăш тупать, анлă, интимлă пĕлтерĕш кӳрет. Çав пĕчĕк детальсенче тĕп шухăш пытанать уншăн. Пĕтĕм пурнăç та – пĕр самант çеç иккен:

## Самант

Самант – куҫа хупса та ӗлкӗреймӗн,
Самант – алăк уҫса та эс кӗреймӗн.
Самант кӗске –
Ҫерҫи сăмси пекех.
Самнт – тăшман пульли тухать те кӗпҫерен –
Ҫын ҫухалать ҫак ҫӗр ҫинчен.
Самант – уа-а! каять сас янраса,
Ҫын тӗнчене килет ҫунатланса.
Самант – куҫпа куҫ тӗл пулать кăна,
Вӗрин ҫеҫ пӗҫертсе каять чуна,
Чăн юрату хыт тыткăнлать сана –
Хăвна мăшăр тупатăн ялана.
Самант – Матросов пӗвӗпе выртать,
Юлашки хут ҫиҫсе илет хӗвел,
Пурăнăҫне парса,
Ҫӗнтерӗве
Кăкăрӗпе вăл ҫул уҫса парать.
Самант – ракета хăвăрт ҫӗкленет
Пӗр космонавт тӗнче уҫлăхӗнчен
Хыпар ярать ҫăлтăр уҫни ҫинчен.
Самант – кӗске –
Ҫерҫи сăмси пекех.
Ҫавах ун вăйӗпе пӗлтерӗшне
Нихҫан та ярас марччӗ ҫил ҫине.
Самант кăна… Анчах ҫав самантсем
Пӗрлешӗнсе пулаҫҫӗ ӗмӗрсем.

**1 е. п.:** Ҫамрăк ҫулсене аса илсе Георгий Александрович нумай сăвă ҫырнă. Вӗсенчен пӗри ҫак сăн ӳкерчӗкпе тачă ҫыхăннă.

*(«Крылатый век» кӗнекере, 60-мӗш страницăра пичетленнӗ сăн ӳкерчӗке экран ҫине кăларсан аван*).

Вун саккăрта ӳкернĕ сăн ӳкерчĕк
Çаплах çыхса тăрать иксĕмĕре.
Епле çап-çамрăк, мĕн тери чиперччĕ?! –
Эпир халь иртсе кайнă çитмĕлрен.

Пăхатăп та – сăну кăштах именчĕк,
Ман алă – сан хулпуççи çинче.
Куçсем çинче асамлă ыр çĕкленчĕк
Йăлтăртатса тăрать кун çутинче.

Утмăлсенчен те иртнĕ çак ӳкерчĕк
Асилтерет чăн юрату пирки.
Çав куçсенче – ман чĕрери хĕвелччĕ,
Ун чух пулман никам та сан пекки.

Чăнах пулман. Ахальтен мар-и халĕ
Утатпăр пурнăç тăрăх юнашар.
Кун-çул пулăшнипе эпир вăй-халлă,
Апла хамăр чыса çухатар мар.

**2 е. п.:** Артист пулас ĕмĕтпе, çак шухăш ăна пĕчĕкренех канăç паман, Георгий «Чăваш коммуни» хаçатра Чăваш драма театрĕн студийĕ студентсене йыхравлани çинчен вуласа пĕлсенех нумай шухăшласа тăман вăл, Шупашкара документсем леççе панă, экзаменсене тытнă.

**1 е. п.:** Унта вĕреннĕ чух, Георгий Александрович чĕринче юрату туйăмĕ çуралать. Светлана Михайлова çамрăк та илемлĕ хĕр. Вĕсем час-часах пĕрле кинона, театрсене çӳреççĕ. Анчах пĕри те теприне шалти туйăмĕ пирки каламаççĕ. Вĕренсе пĕтернĕ çул Георгий Ефимов Светланăн дипломне курать. Хушамачĕ улшăннă – Светлана Бубнова иккен. Кăна пĕлсен пулас поэт Чăваш драма театрĕнче юлма хирĕç пулать, Йĕпреçри колхоз театрне куçать, пĕр çул хушши артистра ĕçлет. Светланăпа Георгий çулĕсем нумайлăха уйрăлса каяççĕ.

**2 е. п.** Турă çырнипе-и, шăпа хушнипе-и: Георгипе Светлана пĕр-пĕрне савни иккĕшĕн чĕринче те йĕр хăварать,

туйӑмсем шала кӗрсе пытанса юлаççӗ… Тепӗр çур ӗмӗртен вӗсем хӑйсен пурнӑçӗсене çыхӑнтараççӗ.

**1 е. п.** Георгий Андреевич чылай пьеса авторӗ. Поэт тӑван халӑх пурнӑçне пур енлӗ сӑнласа çырнӑ пьесӑсем тӑрӑх чӑваш театрӗсем темиçе спектакль те лартнӑ. Куçару енӗпе те анлӑ ӗçленӗ вӑл. Александр Пушкинӑн («сказка о царе Салтане»), Лев Толстойӑн («Власть тьмы»), Антон Чеховӑн (Чайка), Виктор Астафьевӑн (Прости меня), Александр Островскийӗн (Горячее сердце), Сергей Михалковӑн (Разговор с сыном) тата нумай вырӑс çыравçисен хайлавӗсене чӑвашла вулакан патне çитернӗ (*вӗсене выставкӑра кӑтартсан аван – С. Есенин, А. Толстой, А. Блок, И. Бунин, М. Джалиль, Р. Гамзатов, Г. Серебрякова, И. Франко).* Мӑшӑрӗ палӑртнӑ тӑрӑх, поэт куçарнӑ нумай хайлав пичетре те пулман. Вӗсем хӑçан та пулин уйрӑм кӗнекен тухса кун çути курассине шанас килет.

**2 е. п.:** Çапла, тӗлӗнмелле кун-çул, тӗлӗнмелле шӑпа Георгий Андреевич Ефимовӑн. Чӑваш литературине малалла аталантарас ӗçри пысӑк çитӗнӳсемшӗн, халӑхсен туслӑхне çирӗплетме пысӑк тӳпе хывнӑшӑн Георгий Андреевич Ефимова Халӑхсен туслӑхӗн орденӗпе наградӑланӑ, «Чӑваш Республикин культурин тава тивӗçлӗ ӗçченӗ» тата «Чӑваш Республикин халӑх поэчӗ» хисеплӗ ятсем панӑ.

**1. е. п.:** Вӑл Чӑваш АССР Аслӑ Канашӗн Президиумӗн тата Чӑваш Республикин Патшалӑх Канашӗн Хисеп грамотисене, Чӑваш Республикин професиллӗ писательсен Союзӗн Петӗр Хузангай ячӗллӗ премине тивӗçнӗ.

**2 е. п.:** 2005 çулхи октябрӗн 30-мӗшӗнче пирӗнтен ӗмӗрлӗхех уйрӑлса кайнӑ.

**1. е. п.:** Анчах Георгий Ефимовӑн пуян еткерӗ халӑх асӗнче яланлӑхах чӗрӗ.

Курса-и эсӗр
Шӑпчӑк
Ирхине
Каçса кайса юрра шӑратнине?
Вӑл вӑхӑтра шап-шурӑ çӗмӗртсем
Лараççӗ хумханса та именсе.

Çап-çутă сывлăм çеç, йăлтăртатса,
Юрра тăрать хĕвел вăйне парса.
Шăпчăкĕ пур – юрлать, юрлать, юрлать.
Шăнкрав пек, сĕрме купăс пек янрать.
Пĕр сыпăк хыççăн тепĕр сыпăкне
Асамлăн салатать вăл тĕнчене.
Юрлать-çке шăпчăк антăхса кайсах,
Тавралăхра мĕн пуррине манса
Ун çывăхне пыратăн – вăл сисмест,
Юррисĕр пуççăр нимĕн те илтмест.
Çав вăхăтра
Эс пыр та тыт ăна?
Çăмăллăнах
Вăл кĕрĕ аллуна.
Анчах юрра татма епле хăян?
Вăл вăйлă!..
Парăнатăн çав вăя.
Çав вăйпала эс паттăр та ачаш,
Чуну – хĕрӳллĕ сан, чуну – йăваш.
Куçра йăлтăртатса чĕтрет куççӳль.

**2 е. п.:** Паянхи поэзи каçне поэтăн «Пултарулăх» сăвăпа вĕçлетпĕр. Эсир те пултаруллă та маттур пулăр! Тепре тĕл пуличчен.

# УСĂ КУРНĂ ЛИТЕРАТУРА

## Кĕнекесем

1. Ефимов, Г. А. Чĕрере ан сӳнтĕр юрату = Гори, гори, звезда любви / Георгий Ефимов ; [О. А. Алексеев, С. Н. Ефимова пухса хатĕрл.]. – Шупашкар : Çĕнĕ Вăхăт, 2008. – 615 с.

2. Григорьев, Н.Г. Крылатый век : чăваш халăх поэчĕ Георгий Ефимов = народный поэт Чувашии / Николай Григорьев. – Чебоксары : [Новое Время], 2011. – 334 с.

## Статьясем

3. Агивер, Х. Чăваш каçалăкĕ: чăваш халăх поэчĕн Георгий Ефимовăн чун тĕпелĕ / Х. Агивер // Тăван Атăл. – 1996. – № 8. – Хупл. 2-мĕш с., с. 6.

4. Алексеев, О. Çырас ĕç – пурнăç тĕллевĕ / О. Алексеев // Хыпар. – 2006. – 9 чӳк. – С. 4.

5. Прокопьева, Р. Шекспир та мар, Блок та мар – чăваш халăх поэчĕ Ефимов / Р. Прокопьева // Хыпар. – 1996. – 23 çĕртме.

6. Сандров, Н. Юрă сăмахĕсем пирки / Н. Сандров // Тăван Атăл. – 1962. – № 5. – С. 90-93.

7. Семенов, Ю. Илемлĕ тĕнче / Ю. Семенов // Ефимов, Г. Кăмăл ытамĕ / Г. Ефимов. – Шупашкар, 1978. – С. 5-14.

8. Семенов, Ю. Пархатарлă хавхалану / Ю. Семенов // Тăван Атăл. – 1978. – № 7. – С. 58-60.

9. Смолина, Л. Георгий Ефимов / Л. Смолина // Çилçунат. – 1996. – № 9. – С. 19.

10. Хĕвелпе çăлтăрсен айĕнче : Георгий Ефимов чăваш халăх поэчĕ // Хыпар. – 1997. – 30 юпа. – («Хыпар» кĕнеки).

* * *

11. Семендер, Юрий. Живет в песнях и книгах : [воспоминание о народном поэте Чувашии Г. А. Ефимове] / Ю. Семендер // Республика. – 2006. – 26 апр. (№ 18). – С. 11.

## Г. Ефимов çырнӑ сӑвӑсем тӑрӑх кӗвӗленӗ юрӑсем

1. Анне пире çуратнӑ / кӗвви А. Токаревӑн // Тӑван Атӑл. – 1984. – № 7. – С. 71.

2. Ан тунсӑхла / кӗвви Ф. Лукинӑн // Тӑван Атӑл. – 1990. – № 6. – Хупл. 4-мӗш с.

3. Мӗскершӗн пит кӗске-ши каçӗ? / кӗвви Ю. Кудаковӑн // Ялав. – 1984. – № 6. – С. 3.

4. Мирлӗ ӗçшӗн / кӗвви Ю. Кудаковӑн // Пирӗн уявсем. – Шупашкар, 1984. – С. 86.

5. Парнеле мана юрату / кӗвви Т. Фандеевӑн // Ялав. – 1985. – № 7. – С. 3.

6. Сакки сарӑ сарлака / кӗвви В. И. Ильментьевӑн // Тӑванъен (Шупашкар районӗ). – 1994. – 20 кӑрлач.

7. Çӑкӑр / кӗвви А. Токаревӑн // Ялав. – 1986. – № 7. – С. 4.